К 86
Н34
Ч-35107

# Якуркка Михĕхвере

# Чăваш тĕнĕ

Национальная библиотека ЧР
4-035107

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 86
Н34

## ЯКУРККА МИКИХВЕРĔ
## (Н.Е. НАУМОВ)

# ЧĂВАШ ТĔНĔ

## ТĔНЧЕКУРĂМ • ЫР-ХАЯРСЕМ

«Хыпар» кĕнеки. 4 № Шупашкар, 1992, юпа, 3

А Р • 3 стр.



● Якуркка Микихверĕ. Чӳк ырри сăрчĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕ, Кивĕçурт ялĕ. 1991 ç.

**ЯКУРККА МИКИХВЕРЕ — НИКИФОР ЕГОРОВИЧ НАУМОВ** — 1936 çулхи нарăсăн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи халĕ Çатракассипе пĕрлешсе кайнă Тимĕрчкасси ялĕнче çуралнă. Йошкар-Олари вăрман,Хусанти строительство институчĕсенчен вĕренсе тухнă, вăрман хуçалăхĕнче тата строительство организацийĕсенче, Шупашкарта проектсем хатĕрлекен организацире ĕçленĕ.

Çемьеллĕ. Виçĕ ача, виçĕ мăнук.

Ялтилле каласан Тирмечкассинче пурăннă чухнех ял хуçалăх ĕçне, хурал пӳртĕнчи канашлусене, уявсене, чӳксене хутшăннă, ял кĕтĕвне кĕтнĕ, лашасемпе выртмана çӳренĕ май чăваш авалăхĕпе кăсăкланнă. Вăтам Ази, Балти, Кавказ тăрăхĕнче, Украинăра, Шурă Руçре, Финляндире, Ґерманире, Чехо-Словакире çул çӳренĕ май ытти халăхсен йăли-йĕркипе паллашнă. Чĕрĕк ĕмĕр каялла чăваш халăхĕн йăли-йĕркине, ґвалхи тĕн пĕлĕвĕсене, ыр-хаяр вырăнĕсене, ячĕ-шывĕсене ятарласах пухма тытăннă, халăх хушшинче сарма тăрăшнă. Вăл студентсен кĕтнĕ хăни, чылай художнике паллă картинăсем ӳкерме пулăшнă.

2 стр.



35107-чув.
Национальная библиотека Чувашской Республики
2010 02 АВГ 2017

# ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН АВАЛХИ ТĔНЧЕКУРĂМĔ



ЧĂВАШ халăх тĕнĕ хăйĕн вĕрентĕвĕнче этем пĕлĕвĕнчи виçĕ пысăк ыйтăва хуравлать:

1. Тĕнче мĕнле, мĕнрен пуçланса кайнă! Вăл мĕнле курăнать! Çынсем, чĕрчунсем ăçтан тухнă, пуçланнă!

2. Çут тĕнчере мĕнле вăйсем пур! Вĕсене кам тытса тăрать! Кам тытса чарать!

3. Çынсем (халăхсем) мĕнле вăйсене пăхăнаççĕ, мĕнле йăла-йĕрке тытаççĕ, тавлашусене мĕнле татса параççĕ! (Ку статьяра пĕрремĕш ыйту çинче чарăнса тăрăпăр).

Тĕнче мĕнле пуçланса кайни пирки виçĕ тĕрлĕ ăнлантараççĕ:

1.1. Тĕнче, тĕнчери пур япала, чĕрчун, ӳсен-тăран Аçапа Амаран пулса кайнă.

Малтан сĕм-тĕттĕм кăна пулнă. Аçи Пĕлĕт пулнă, пĕлĕт çинче пурăннă Ами Çĕр пулнă, çĕр çинче пурăннă. Вара вĕсенчен ытти пĕтĕм тĕнче çуралнă. Пĕлĕтпе Çĕр вăл вăхăтра пĕр-пĕринчен çывăхрах тăнă. Пĕлĕт çине аслăк çине улăхса ларнă пекех ларма пултарнă. Хĕр ачасем уйăх çутинче пĕлĕт çине кĕнчеле арлама улăхса ларнă.

Пĕрре типтерсĕр хĕрарăм ача каккипе вараланнă тутăр татăкне пĕлĕт çине пĕтĕрсе чикнĕ. Ун хыççăн пĕлĕт çиленсе кĕмсĕртетнĕ, халĕ тăракан вырăна — çӳле — улăхса кайнă, юпасем çине хăпарса тăнă.

1.2. Тĕнче таçтан вĕçсе аннă, вĕçсе килнĕ кайăк-кăвакалăн тем пысăкăш çăмартинчен пулнă.

Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсе пĕр кăвакал (икĕ кăвакал) вĕçсе килсе ларнă, шыва чăмса шыв тĕпĕнчен юшкăн илсе тухнă (иккĕмĕш кăвакалĕ çăмарта тунă).

Çав юшкăнран çĕр туса янă. Çĕр çине кăвакалĕ çăмарта туса хунă. Çăмартинчен тĕнче пулса кайнă. Çăмарта сарринчен — сарă, çутă тĕнче, çăмартара çӳлте тăракан сывлăшран — сывлăш, çăмарта шурринчен — çĕр çинчи юханшывсем, тинĕссем. Çак кăвакалсем тĕнче хĕррипчен аякра ларакан юпасем çинчи йăвара пурăнаççĕ: ылтăн юпа çинче — ылтăн кăвакал, кĕмĕл, пăхăр, тимĕр, йĕс юпасем çинче — çав евĕрлĕ кăвакалсем.

1.3. Тĕнчене, тĕнчери мĕнпур япалана, ӳсен-тăрана, выльăх-чĕрлĕхе, шыври чĕрчунсене Турă тунă.

Турă вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсре шыв çинче кимĕпе ишсе çӳренĕ, тĕнче тума шутланă (унпа пĕрлех Пӳлĕх ятлă Кĕçĕн Турă пулнă). Турă Пӳлĕхе шыв айĕнчен юшкăн илсе тухма хушнă. Пӳлĕх пултарайман. Турри вара те çилленнĕ, те ахаль сурас килнĕрен сурнă. Сурнă та — сурчăкĕнчен Шуйттан пулса ларнă. Шуйттанĕ юшкăн илсе тухма пултаратăп тенĕ.

Турри ăна хушасшăн пулман, анчах ирĕксĕрех килĕшнĕ, юшкăнне шыв тĕпĕнчен иличчен Турра асăнма хушнă. Шуйттанĕ пĕрре чăмнă, тепре чăмнă, Турă ятне асăнасшăн пулманнипе юшкăна илсе тухайман.

ТУРĂ:

— Эсĕ манăн ята асăнтăн-и!

ЛЕШĔ:

— Çук.

ТУРĂ:

— Асăн, асăнмасан ирĕк пулмасть.

Шуйттанĕ виççĕмĕш хут чăмать. Шыв тĕпне çитсен Турă ятне асăнать, çав вăхăтра çулăм тухса вут хыпать, шыв тĕпĕ уçăлать та Шуйттанĕ çăварне юшкăн сыпса илет, ишсе тухать. Турă алли çине юшкăна кăларса парать, юшкăна кăштах çăварĕнче пытарса хăварать.

Турă юшкăна шыв çине кĕвелĕк-çеçпе пек сапать те шыв çинче çĕр пулса саралса каять. Çав вăхăтра Шуйттанăн тути-çăварĕ тем пысăкăш ӳссе кайнине курать. Кăна çăварĕнчен пӳрнипе шаккать. Шуйттанăн çăварĕ çурăлса каять те унтан çĕр çине чулсем тухса ӳкеççĕ. Тутинчен тумланă юнĕнчен шутсăр нумай шуйттансем пулса каяççĕ. Шуйттанĕ Турра çиленет те хытса ларман Çĕр çине вĕрме пуçлать. Вара çĕр çинче хутлам-хутлам сăрт-тусем пулса каяççĕ.

Турри вара куншăн Шуйтанне шыв айĕнче, çĕр тĕпĕнче çеç пурăнмалла туса хурать. Шуйттанĕ каса Турăран кăштах та пулин çĕр ыйтать. Турри памасть. Шуйттанĕ хăть пĕр туя лартмалăх та пулин çĕр пар тет. Турри килĕшет. Çавăнтан ĕнтĕ Шуйттансем çĕре туйипе шăтарса çĕр тĕпĕнчен çĕр çине тухаççĕ, çынна усал туса, усала вĕрентсе çӳреççĕ.

Çĕр тунă хыççăн Турă ытти япаласене тăвакан, пăхакан, упракан турăсене туса лартнă.

Каярахга çĕр çинче пурăнмалли Çын тăвас тенĕ. Малтан пылчăкран Çын кӳлепи тунă. Ку кӳлепи лăмчăр-ламчăр çеç пулнă — Турă çын валли чун илме кайнă. Çын кӳлепине сыхлама йытта хăварнă — йытти сыхлас вырăнне, таçта чупса çӳренĕ. Çав вăхăтра Шуйттан Çын кӳлепи патне пынă та сурса вараласа пĕтернĕ. Турă таврăнать те çак ирсĕр ĕçе курать, анчах тепĕр хут Çын кӳлепине тăвасшăн пулмасть — вара Çын кӳлепине алса тулне таварнă пек таварать те хурать, çăварĕнчен чун вĕрсе кĕртет. Çавăнпа ĕнтĕ çын тулашĕнчен питĕ илемлĕ, тăпăл-тăпăл, таса курăнать — пĕтĕм тасамарлăхĕ шалта, ăшчикре.

2. Чăваш халăх тĕнĕнче тĕнче виçĕ хутлă. Чăваш халăх тĕнĕнче çутçантанлăхăн чи пысăк вăйĕсем, туррисем: Çĕр, Шыв, Вут, Çил. Чăвашсем хăйсен кĕллисенче Пĕлĕте, Хĕвеле, Уйăха асăнаççĕ.

3 стр.

2.1. ÇИЛ. Çил вăйне «лăпкă», «вăйлă», «тăвăл», «хаяр», текен паллăсемпе уйăрса хакланă. Вĕсен пахалăхне «ăшă», «сивĕ», «уçă» ăнланусемпе палăртнă.

Авалхи тĕн йĕркинче чăвашсем çиле турă вырăнне хурса хисепленĕ. Пĕр енчен, çил-тăвăл кăларакан пĕлĕте турă тĕнче тĕпинчен çӳлерехе, аялтан шутласан çиччĕмĕш сие вырнаçтарнă пулать. Тепĕр енчен, çил йышĕ тĕнче хĕррИнче, сăрт-ту леш енче пурăнать, тенĕ. Çав сăрт-ту витĕр тухса çӳреме çил таврашĕсем валли çын тути евĕр шăтăк пур иккен. Сăрт-ту хушшинчи çил тутине пĕр карчăк сыхласа тăрать, тет. Пĕр чух çил тутине пăкăлать, тет, çавă тепĕр чухне уçса ярать тет. Çĕр çине вэра е лăпкă çил, е хаяр çил вĕçсе тухса каяççĕ тет.

Çил-тăвăл кăларакан пĕлĕт тӳперен çӳлерех вырнэçнă текен юмахра та Турă çав пĕлĕте çĕр çине тӳпе хапхине уçса кăларса ярать.

Çил таврашĕсем, çил ачисем çĕр çинче е ĕç туса, е сиен кӳрсе çӳреççĕ. Усал çиле, çавра çиле халăхра çĕçĕ-кусарпа хăратнă. Ырă çил таврашне чӳк туса асăннă.

2.2. ШЫВ. Шыв тĕнче пуçланиччченех пулнă, тесе калэнă юмахсенче. Шыв çинче çĕр тĕнче, пурнăç пуçланса кайнă тенĕ. Шывăн унăн шыва путаракан, çĕре ишсе юхтаракан, çĕре шăвэракан вăйсем, таврашĕсем пур имĕш.

Юмахсенче шыв вутран та вăйлă. Вучĕ унран чул ăшне кĕрсе кăна сыхланса юлнă мĕн. Шыв пахалăхне шыв йышĕсем упраса тăраççĕ, тет. Шыв мĕнлине (пахалăхне) «таса шыв», «шурă шыв», «хура шыв», «тутлă шыв», «йӳçĕ шыв», «юхан шыв», «кулленчĕк шыв», «пусă шывĕ», «çăлкуç шывĕ» т. ыт. те сăмахсемпе палăртнă. Юмахсенче: шыв йышĕ тарăн авăрта шыв тĕпĕнче пурăнать тесе каланă.

Авалхи чăвашсем шыв йыш туррисене хисеплесе чӳк тунă. Çулла çумăр ыйтнă. Çăлкуç ан типтĕр тесе, çăлкуçне тасатнă çăмартапа пăтă лартнă. Хĕле кĕресле, пăр лэрсан, шыв йышне асăнса, вэк касса шыва пăтă янă. Шыв йышне çуллаcенче çĕре типĕтсе е ытла шăварса çĕртсе ан яр тесе йăлăннă.

2.3. ВУТ. Чăвэш юмахĕсенче вут пĕлĕтпе те, çĕрпе те, çĕр айĕпе те сыхăннă. Аçа çиçĕмрен тухнă вута таса вут тенĕ. Типĕ йывăçран сăтăрса кăлэрнă вута çĕнĕ вут тенĕ. Таçтан амакран сиксе тухакан вутта вутлă сехмет тенĕ. Вутăн вăйĕ-хăвачĕ юмахсенче вут-йыш туррисем пек курăнать. Вут-çулăм, аçа-çиçĕм, вут-кăвар, вут-кайăк вутлă çĕлен, ырă вут, хаяр вут тата ытти ятпа çӳрекен вут паллисем пур тĕн йĕркинчи кĕлĕсенче.

Авал чӳксенче, киремет кĕллисенче вут-йыш туррисене асăнмасăр ирттермен. Тĕн уявĕсенче вутпа усă курнă. Вут пур усала та хăратать, пур чире те, пур мура та çĕнтерет тенĕ. Кил-терĕшре усă куракан вута та турă вырăннех хунă. Хуран айĕнчен вут тухса кил-çурта çунтарса ан ятăр тесе, апат пĕçернĕ чух кăвайт çине кашăкпа яшка сапнă е пăтă пăрахнă. Пӳрте-йыша пăхакан хĕртсурта тирĕкпе кашăк хурса пăтă лартнă.

2.4. ÇĔР. Çĕр йышĕ. Çĕр-шыв ырри. Çĕр эма турă тесе шутланă. Авалхи тĕн йĕркинче çĕрпе сыхăннă вăйсене çакăн пек ятсемпе каланă: çĕр йышĕ, çĕр амăшĕ, çĕр ашшĕ, хĕрлĕ сыр (çĕр) çĕре-шыва кĕтекен, пăхакан сыхчи, кĕтӳçĕ, çĕр сулу, çĕр пĕвĕ.

Калас пулать, авалхи тĕрĕксен йĕр-су (çĕршыв) ятлă турă (е турăсем) пулнă. Вăл та çĕрĕн-шывăн ама (амай) туррине пĕлтерет. Чăвэшсен тĕн ăнланăвĕнче çĕр турри çын евĕрлĕ пулнă. Çĕрĕн пусĕ те, пĕвĕ те, кăкăрĕ те, кăвапи те пур иккен. Елĕк авал çуралу вырăнне «ырă», çуралнă чуна (япалана) «ырри», «ырлăхĕ» тенĕ. Çулсерен чĕрĕлсе йăл илекен ӳсентăранпа чĕрчуна «çĕр ырри» тесе каланă, вĕсем çĕрпе, çĕр кăвапипе çыхăнса тăраççĕ тесе шутланă. Çапла маях, сăмахран, сурăх путеккине «сурăх ырри» (сурхури), ĕне пăрушне «ĕне ырри», çын хунавне «ăру», «ăратлăх» тенĕ.

Авалхи тĕн йĕркисенче çĕр-шыв туррисене ытти турăсемпе пĕрле асăннă, вĕсенчен, кĕл туса, тырпул ӳстерме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, чир-чĕртен сыхланма ырлăх-сывлăх ыйтнă.

# ЫРĂСЕМПЕ ХАЯРСЕМ

## (Мифологи словарĕ)

Турăсем, усалсем, ыр-хаярсем вунпĕр (тăхăр) уйрăма пайланнă.

### Çӳлти патшалăх. Виççĕмĕш хут

I—1. Çӳлти патшалăх. Кăвак пĕлĕт çинчи турăсем.
II—2. Çутçанталăкри пулăмсем, хăватсем. Вĕсен туррисем.

### Çĕр çинчи патшалăх. Иккĕмĕш хут

III—3. Çĕр çинчи вырăнсене (хăй тĕллĕн тăран, çын туман вырăнсене) сыхлакан турăсем.
— 4. Çĕр çинче çын ĕçлесе тăракан вырăнсене (анауйсене) упракан турăсем.
IV—5 Çĕр çинче хăйсем тĕллĕн пурăнакан чĕрчунсен туррисем.
— 6. Çĕр çинче усраса ӳстерекен выльăхсен, чĕрчунсен туррисем.
V—7. Çĕр çинчи ӳсентăрансен, йывăçсен туррисем.
VI—8. Пӳрт-çурт, картиш таврашĕсен туррисем.
VII—9. Çын. Çын пурнăçне хӳтĕлекен, пĕтерекен турăсем, усалсем.
VIII—10. Шыв. Шыв вăйĕсен туррисем.

### Леш тĕнче патшалăхĕ. Пĕрремĕш хут

IX—11. Леш тĕнчери усалсем.

## Алфавитлă словарь

1. **АВĂН ТУРРИ** — авăна, йĕтеме сыхлакан турă, авăна типĕтме сарнă тырпула вут ярса илесрен сыхлакан турă. Авăн йышĕ: Авăн турри, Авăн сыхчи, Авăн перекечĕ.
2. **АКА ТУРРИ** — ака тума пулăшакан турă. Акнă тырăн, çĕрĕн амалăхĕ. Ака йышĕ: чӳк кĕллинчи турăсем.
3. **АКĂШ-МАКĂШ** — Ыр-хаярсем. Вăрманта хăратакан усал вăй. Кукăр-макăр йывăç мĕлки, тĕттĕмре йăл-ял курăнакан куçлă çутă.
4. **АЛПАСТĂ** — Пусаракан, пăвакан, сывлăша хуплакан усал. Капан пек пысăк хура мĕлке, усал вилен тытса пусаракан вăйĕ.
5. **АМА, АМА ТУРĂ** — Тĕнче çуратакан ама турă. Çĕр çинче пурăнать.
6. **АМАК** — Усал. Чир. Усал вăй. Тĕттĕм тĕпсĕр шăтăкри. Усал амăшĕ. Ача çуратнă вăхăтра чуна вĕлерекенĕ. Тытамак чирĕн амăшĕ.
7. **АНА ТУРРИ** — Ака-уй турри. Акнă ана вăйĕ, амалăхĕ, ана сыхчи, акнă анана упракан, сыхлакан турă.
8. **АНКĂ-МИНКĔ** — Тăна илекен усал. Чĕлхене пăтратакан, çӳтерекен усал.
9. **АНРА-СУХРА** — Ухмаха кăларакан, типĕтсе яракан, чĕлхесĕр, тăнсăр туса хăваракан усал.
10. **АНСАТ** — Ырă-усал. Кĕске вăхăтра тăвакан ырă. Пурнăçа кĕске вăхăтра хуçакан усал.
11. **АРПАХ-САРПАХ** — Пурнăçа сӳтсе салатса яракан усал. Вилнĕ çынăн чунĕ. Тепĕр вилекен çынăн чунне тупăк умĕнче сыхласа тăрса илсе каякан усал.
12. **АРĂШ-ПИРЕШ** — Пурнăçа урлă-пирлĕ ватса тăракан усал.
13. **АРÇУРИ** — Вăрман турри. Вăрманти ырă-усал.
14. **АСАМ** — Асамлăх турри. Тем тума пултаракан, тем тума вĕрентекен ырă-усал.
15. **АСАМАТ КĔПЕРЕ** — Тĕнри асамлă кĕпер. Çумăр çума пĕлĕте шыв тултарса туртса уйăхмалли кĕпер. Асамат кĕперĕ — саламат, сарамат, сĕвек, сӳрекке, сăрап, çĕлен, вилнĕ çынсен кĕперĕ.
16. **АСАР** — Вутлă усал. Ясара яракан, пурнăçа юхха яракан пысăк усал.
17. **АСАР-ПИСЕР** — Вĕрсе-çунса тăракан, сиксе тухакан усал.
18. **АСЛАТИ** — Пĕлĕт çинчи аслă турă, çумăр турри, аçа çапакан, кĕмсĕртетекен, авăтакан турă.
19. **АÇА** — Ама турăпа тĕнче тăвакан турă. Аçа-çиçĕм ашшĕ. Пĕлĕт çинчи турă.
20. **АÇА-ÇИÇĔМ** — Çĕре чĕтретекен, пĕтĕлентерекен турă, Ама турра пĕтĕлентерекен турă. Çумăр вăхăтĕнчи çиçĕм.
21. **АÇА ЧУЛĔ** — Пĕлĕтрен ӳкекен чул. Аçа турă иртĕхсе кайнă шуйттансене, усалсене хăваласа çӳренĕ чух пенĕ чул.
22. **АÇТАХА** — Усал, Вĕри çĕлен. Асар-писер вутлă çĕлен, çунатлă вĕçекен çĕлен. Тăлăх хĕрарăмсен ăсне пăтратакан, çумне çыпăçакан усал. Умĕнчен пăхсан арçын пек, хыçалтан пăхсан çурăмĕ çĕлен хуппиллĕ.
23. **АТАМ (ЭТЕМ)** — Турă пылчăкран туса чĕртнĕ пĕрремĕш çын.
24. **АХ** — Пурнăçа пĕтерекен, салатакан усал.
25. **АХĂР** — Тĕнче пĕтнĕ вăхăтри, тĕнче пĕтнĕ кунри усал. Ахăр самана — Усал вăхăт.
26. **АХРАТ** — Усал. Ахрат çырми — тĕнче хĕрринчи тĕпсĕр тĕттĕм çырма. Усалсен çырми.
27. **АША** — Аша çавăракан турă. Ăшши-пăшши, çилле, усала уйăракан е кăларакан турă.
28. **АШАПАТ, АШАПАТМАН** — Усалсене хăвалакан, сирекен турă. Ашапатман карчăкĕ — Усал вăйне пăхăнтаракан, хăвалакан, асамлă кĕлĕсене пĕлекен, чир-чĕртен чĕртекен юмăç карчăк.
29. **ĂМĂРТ** — Пĕлĕтри кайăк пек вăйлă турă. Пĕлĕт хуралçи. Ăмăрт кайăкĕ — чи пысăк, вăйлă вĕçен кайăк, кайăксен патши.
30. **ĂНШĂРТ (ЫНШЫРТ)** — Çын çине ӳкекен усал. Вăрçакан çынсенчен тухакан усал. Тип-шар шуйттанĕ.
31. **ĂПĂР-ТАПĂР** — Усалсем. Усалсем яракан чирсем. Çул çинче çӳрекене хăратакан усалсем.
32. **ĂРАСКАЛ** — Пурнăçа упракан ырă турă. Телей яракан турă.
33. **ĂРĂМ (ЫРĂМ)** — Ырăсем, ырлăх турри.
34. **ĂРĂС (ĂРĂСĔ)** — Ырă турă. Телей турри.
35. **ĂРША, ĂРÇА** — Тырă ӳстерекен турă. Хаяр Ăрша — тырра типĕтсе яракан усал. Ăрша амăшĕ. Ăрша хаярĕ.
36. **ĂША КАРАКАН** — Ăша сыхлакан, лăплантаракан турă.
37. **ВАЛЕÇСЕ ПАРАКАН** — Турă. Тупăша валеçекенĕ.
38. **ВĂРМАНТИ** — Вăрман турри. Вăрман пуçĕ, Вăрман ырри.

39. ВЕЛТРЕН КАЙĂК ТУРРИ — Хурт туррине пыл пуçтарма пулăшать.

40. ВĔРЕ (ВЕРИ) ÇЕЛЕН — Аçтаха. Чир яракан усал. Пĕччен арăмсене пусмăрлакан усал.

41. ВИРЕМ — Уяв, Ырă усал. Вилнĕ ваттисем. Вилнĕ ваттисене ăсатни.

42. ВУПĂР — Пусаракан, чăмлакан, çăтса яракан усал.

43. ВУПКĂН — Выçă йытă пек усал. Çисе тăранман усал. Выльăх-чĕрлĕх çине чир-чĕр яракан усал.

44. ВУТ — Вут турри. Вут пуçĕ. Вут ашшĕ. Вут ама, Вут амăшĕ. Ама вут. Ясар вут. Вут кайăкĕ. Вут-кăвар. Ырă вут. Усал вут. Вутлă вупăр. Вутлă хаяр. Вут çиçĕм. Килçурт вучĕ. Мунча вучĕ. Çĕнĕ вут. Вут турри — чи таса, çутă турă.

45. ВУТЛĂ ÇЕЛЕН — Аçтаха. Тĕнче пĕтес умĕн курăнать.

46. ВУТĂШ — Шыври турă. Шыв турри. Вутăшăн хĕрĕ. Çыран хĕрне çап-çара тухса выртать. Питĕ хитре, хура тачка çӳçлĕ. Çӳçĕ юханшывра тем тăршшĕ тăсăлса выртать. Вутăшăн ачи пур. Çăл кутĕнче пурăнать. Çăл кăларса тăрать.

47. ЕМĔР УПРАН — Емĕре, пурнăçа упракан турă.

48. ЕРЕСКЕЛ — Ерĕхтерсе, тарăхтарса яракан усал. Пурнăçăн усал шăпи.

49. ИЙЕ — Вата амай, килĕш. Кил-йыш турри. Пурнакиле усал пулса кайнă, чăмлакан, чир-чĕр яракан усал пулса тăнă. Авалхи ырă ийе турăсем: Мул ийи, Çĕр ийи, Кĕлĕ ийи, Макра(кан) ийе, Чĕпĕте(кен) ийе, çул(çӳрекен) ийе, Çĕрлехи ийе, Ырхан ийе, Мăнтăр ийе, Арçын ийе, Ватă ийе, Çамрăк ийе, Типĕри ийе, Шыври ийе, Ийе ашшĕ, Ийе амăшĕ, Уй ийи, Вăрман ийи, Карта ийи Кăмака ийи, Пусма ай ийи, Сакай ийи, Пӳрт ийи, Мунча ийи, Пуш пӳрт ийи, Вичĕ кусlă ийе.

50. ИЛЕС-МИЛЕС — Кукăр-макăр, çĕтĕк-çурăк лăпсăркка усал.

51. ИП — Ырă Чире хăвалакан, сирсе яракан турă.

52. ИТЕМ (ЙĔТЕМ) ТУРРИ— Турă. Итем (йĕтем) сыхлакан турă. Йышĕ: Итем перекечĕ, Кăшăл перекечĕ, Итем сыхчи, Итем ийи.

53. ЙĂЛАРАН-ПĂЛАРАН (ЙУЛАРАН-ПАЛАРАН) — Йăлана пăхакан, вĕçлекен турă.

54. ЙĂК — Чикĕнсе тухакан усал. Йĕксĕк — сиксе тухакан усал.

55. ЙĂХ-ЯХ — Çĕтĕке, çукка кăларакан усал.

56. ЙĔРĔХ — Авалхи амалăх турри. Çĕр-йыш турри. Çĕр ырлăхĕн турри. Хĕрарăмсене сыхлакан, ача паракан турă. Йĕр-су — тĕрĕксен çĕр-шыв турри. Пурна-киле усал турă пулса тăнă. Çăпан, кукша, шатра яракан усал пулса кайнă. Ырă йĕрĕх турăсем: йĕрĕх ами, йĕрĕх кинемей, йĕрĕх ĕмпечи (ĕмпичи). Йĕрĕхе киреметре асăннă, кĕл тунă. Йĕрĕх çăлĕ пулнă.

57. ЙĔРĔХ-ЯРĂХ — Йĕрĕхе упракан турă. Йĕрĕх çурчĕ, тумтирĕ. Йĕрĕх тавращĕ. Каярахпа — чир яракан ватă, çĕтĕк усал.

58. ИЛМЕВĔС—Усал. Шыври тем пысăкăш çăварлă çĕлен е пулă. Аялти тути çĕре, çӳлти тути пĕлĕте çитиччен. Çăварне карса тăрать. Тĕнче пĕтнĕ кун çĕре çăтса ярать.

59. КАКĂР — Тĕпсĕр шăтăк. Тĕпсĕр çĕр-шыв. Тĕпсĕр шăтăкри усал.

60. КАЛĂМ — Вилĕм турри. Вилĕсем. Калăм кунĕ — вилĕсене асăнмалли кун.

61. КАРА ЧУН — Усал. Хура чун. Вĕлерекенĕ, чун илекенĕ.

62. КАРТАРИ ТУРĂ — Выльăх-чĕрлĕхе упракан турă. Карта-йыш туррисем: Карта пуçĕ, Карта кĕтекен, Карта сыхлакан, Карта сыхчи, Карта хуçи, Карта никĕсĕ, Карта тивлечĕ, Карта перекечĕ.

63. КАТЕМПИ (катемпи) — Сыхчă, хуралçă, ватă «карчăк», пахча хуралçи.

64. КАЧА-МĂЧА — Асамлă чул. Вилнĕ асаттесен ырă усалĕ, каснă сурана тӳрлетет.

65. КĂВАК ХУППИ — Турă. Кăвак пĕлĕт хапхине сыхлаканĕ. Пĕлĕт хапхине уçса çĕр çине телей ярать. Кăвак пĕлĕт хапхи çурçĕр енче, питĕ хăвăрт уçăлса хупăнать, куçа мăчлаттарса илнĕ хушăра кăна.

66. КĂЙ КĂРĂШ — Килти турă. Пĕчĕк кайăк. Алтан (автан) виçĕ çăмарта тунă та пусарса чĕп кăларнă. Пĕр çăмартинчен çĕлен шăтарса тухнă — вăл пахча хуралçи, кил таврашри çĕрсене пăхса пурăннă. Тепĕр çăмартинчен йытă çури сиксе тухнă — вăл çурта, картишне хурал тăнă. Виççĕмĕш çăмартинчен Кăй кăрăш шăтарса тухнă, пӳрте вĕссе килнĕ — пӳрт хуралçи пулнă. Кăй кăрăш хуçисенчен çĕрĕн-кунĕн ĕç ыйтать, кил хуçине пулăшать. Кил хуçи юлхава, ĕçкелекене тухсан Кăй кăрăш пулăшмасть, пӳртеçурта пĕтерет. Кăй кăрăш пĕчĕк, хĕрлĕ вут-хĕлхем пек кайăк. Çурт çунас умĕн Кăй кăрăш пӳрт тăррине вĕçсе улăхса ларать.

67. КĂМАКА АМĂШĔ — Килти турă. Пӳрт-çурта вут-кăвартан сыхлать. Кил-йыша пăхса ăшăтса пурăнать.

68. КЕПЕ (КĔПЕ) — Çӳлти ама турă. Çуралнă ачасене чун параканĕ. Ачана виçĕ кунтан çусан, ят хывса кĕпе тăхăнтартсан чун кĕрет, чунне Кепе турă парать. Кепе турă йышĕсем: Кепе амăшĕ, Кепе ашшĕ, Кепе умĕнче çӳрекен пӳлĕхçи, Кепе хаярĕ, Кепе инкекĕ.

69. КЕЛЕ (КĔЛĔ) — Турă. Турă умĕнче каланă сăмахсем, ыйтнисем, кĕл туни. Келе турăсем, кĕлле йышăнакан турăсем: Кĕлĕ амăшĕ, Аслă кĕлĕ, Мăн кĕлĕ, Кĕçĕн кĕлĕ, Кĕл илекен, Талăри кĕлĕ, Вăталăх кĕлĕ, Кĕл тум хаярĕ, Кĕлĕ алăк умĕнче тăракан, Кĕлĕ алăкне уçакан. Кĕлĕре асăнмаллисем: Хура шыв кĕлли, Шурă шыв кĕлли, Çиппе çӳрен кĕлĕ, Выляса пыракан кĕлĕ, Шыв çинчи кĕлĕ... Кĕле ирттерекенсем: кĕлĕ кĕтӳçĕ, кĕлĕ пуçĕ, кĕлĕ кĕтекен, кĕлĕ хуçи, кĕлĕ шăлакан.

70. КИВ ЯЛ ТУРРИ — Яла, кил-çурта сыхлакан турă.

71. КИЛ ТУРРИ — Киле, çурт-йĕре, çемьене сыхлакан турă. Кил-йыш туррисем: Кил йышĕ, Кил перекечĕ, Кил вучĕ, Кил кайăкĕ, Кил çĕленĕ, Кил тухмарĕ (тымарĕ), Кил хуçи, Кил хĕрт-сурчĕ, Кил киремечĕ.

72. КИПЕТ — Турă. Усал. Авалхи кипет витнĕ урапапа куçса çӳрекенĕн çул çинчи турри. Каярахпа кипетлĕ урапапа çӳрекен куланай пуçтаракан усал турă.

73. КИРЕМЕТ (КЕРЕМЕТ) — Турă. Киремет туррине асăнмалли вырăн. Киремет туррине кĕл туса ирттерекен уяв. Авал киремет ырă турă, Çӳлти туррăн çĕр çинчи ачи пулнă: вăл çутă пулнă, шурă лашапа çӳренĕ, çынсене пулăшнă. Çынсем ăна çӳке вĕренсен çунтарса янă, кĕлне салатса янă. Пур кĕл пĕрчинчен йывăçсем, юмансем шăтса ӳснĕ, киремет йывăççисем пулса тăнă. Çынсем вĕсене Киремет тесе кĕл тунă. Киремет вĕсене упранă, пăхнă. Ăна ырă тума чӳкленĕ. Киремете киремет картишĕнче асăннă. Киремет турăсем: Аслă киремет, Мăн киремет, Вăталăх киремет, Кĕçĕн киремет, Киремет ашшĕ, Киремет амăшĕ, Кĕмĕл киремет, Хĕрлĕ çыр киремет, Йăваш киремет, Хаяр киремет. Пур ялăн та тенĕ пекех Киремет, кашни Кереметĕн ячĕ пулнă—вĕсен ячĕсем темиçе çĕртен

те иртеççĕ. Христос тĕнĕ Киремете усал турă тесе вĕрентнĕ.

74. КУЙ КĂРĂШ — Кăй кăрăш.

75. КУÇ ТУРРИ — Куçа сыхлакан турă. Куç чĕлхи — куçа упрама каланă кĕлĕ, куçа чĕртекен кĕлĕ.

76. КУРĂК ТУРРИ — ўсен-тăран, улăх-çаран турри.

77. КУРМĂШ — Пулассине пĕлекен турă. Ăраскал.

78. КУШАР — Çурхи уяв. Выльăх карти. Выльăх турри.

79. ЛАША ТУРРИ — Лашана упракан турă.

80. ЛĂП-ЛАП — Чир-чĕр яракан усал. Усал вилĕпе вилнĕ çынсен чунĕ.

81. ЛĂПĂР — Вупăр пек усал. Уйăха çисе яракан, уйăха пусакан усал. Çынна пусарса чир яракан усал.

82. ЛЕШĔ — Пире хирĕç ĕç тăвакан усал. Леш тĕнче. Леш тĕнчери. Леш тĕнчери çичĕ хĕвел, çичĕ уйăх, анчах тĕттĕм.

83. МАСАР — Çăва. Çăва çинчи ырă-усалсем. Масар турри, Масар сыхчи, Масар тўр кĕлли, Масар пуçĕ, Масар пуç арăмĕ, Масар эсрелĕ, Масар тавраше.

84. МУНКУН [МĂНКУН] — Уяв. Çутă кунăн аслă уявĕ. Çутă кунăн турри. Мункун умĕн — калăм эрни. Калăм кун — кĕçнерникун, халĕ шăматкун. Калăм кун — вилнисен кунĕ.

85. МУНЧАРИ — Мунча турри, Мунча иййи, Мунча хуçи.

86. МУР [МОР] — Чир-чĕр яракан усал. Выльăха пĕтеренен усал. Чун илекен усал.

87. НАР — Хĕвел. Нартăван — Çĕнĕ çул [25.03]. Илемлĕхĕн çутă турри.

88. НИКĔС ТУРРИ — Çурт-йĕре, йăха-тĕле упракан турă. Никĕс тытан — турă ячĕ. Никĕс пăтти — никĕс туррине чўклесе панă, çинĕ пăтă.

89. НЎХРЕП [НЎХРЕП ТУРРИ] — Нўхрепе пăхакан турă. Нўхреп хуçи, сыхчи.

90. НУХĂТ — Юмăç ырри-усалĕ. Юмăç турри.

91. ПАТША — Халăх пуçлăхĕ. Турă. Çўлти патша, Çĕр патши, Халăх патши.

92. ПĂСТАШ — Ырă усал. Пăскăнчăк, таса мар. Чир юлашкин усалĕ. Чир тасатакан турă. Пăсташ тасатан, пăсташ илекен турă. Йăла уявĕ хыççăн, чўк тунă хыççăн ăсăнса тăвакан ĕçĕн ырă-усалĕ. Йăларан-пăларан пăхакан турă.

93. ПĂХĂТ-ПĂХАН — Турă. Пурнăçа пăхса тăракан турă.

94. ПЕРЕКЕТ ТУРĂ — Пурнăç паракан, пурлăха упракан турă. Перекет амăшĕ, Перекет ашшĕ, Уй перекет, Итем [йĕтем] перекет, Кăмăл перекет, Кĕлет перекет, Кил перекет, Суту-илў перекет, Перекет паракан, Перекет тытан, Перекет çумăр.

95. ПЕРИ — Усал. Усалсен пуçлăхĕ. Леш тĕнче пуçлăхĕ.

96. ПЕРТЕРЛИ — Турă. Апат-çимĕçе çиме юрăхлă тăвакан турă. Пĕртĕрлĕ пурăнма пулăшакан турă.

97. ПИЛ-ПЕХИЛ ТУРĂ — Ырă сунакан турă.

98. ПИРЕШТИ — Ырă турă. Анкĕл. Çын чунне сыхлакан турă. Пўрте, кил-йыша сыхлакан, пăхакан турă.

99. ПИРЛЕ КЕЛЕ — Вырăнти турă. Киремете пир парса чўк тусан кĕлĕ йышăнакан турă. Пир тĕртнĕ чух Пирлĕ кĕлле асăнса ĕçе пуçланă.

100. ПИХАМПАР — Турă. Выльăх пăхакан, картиш пăхакан турă. Кашкăрсен турри. Çын пурнăçне упракан турă.

101. ПИЧУРА — Турă. Пўрте пăхакан турă. Кăмака çинче пурăнать.

102. ПЎЛЕХ — Турă. Çынсене телей салатакан турă. Çын пурнăçне, ăраскалне çуралсан çамки çине картласа паллă тăвакан турă. Пурнĕçа упракан турă. Пўлĕхçĕ амăшĕ — Турă.

103. ПЎРЕН — Пурнăç шăпине салатакан турă. Ама пўрен — вĕлле хурчĕсен ами, турри. Хай пўрен — пурнăç, чун турри. Пўрен ырă — хўтĕлекен ырă, турă.

104. ПЎРТЕН — Чир яракан усал. Пўртрен пўрте чир илсе пыракан усал. Пўртен амăшĕ, пўртен тăванĕсем — кĕлĕре асăннă ырă усалсем.

105. ПЎРТРИ — Турă. Пўрте, йыша пăхакан турă. Пўрт амăшĕ — турă.

106. ПЫЛ [ПЫЛАК] ПАРАКАН — Турă. Пыл паракан, пылак паракан турă.

107. РАЙ — Çўлти тĕнчери çĕршыв. Çўллĕ хўмеллĕ, алăклă вырăн. Çăтмах. Унта çылăхсăр çынсен чунĕсем пурăнаççĕ.

108. РĂС. РĂСКАЛ [ĂРĂС. ĂРАСКАЛ] — Пурнăç шăпине тытакан турă, ырă-усал. Рăс тытан — телей тытан турă.

109. РÇА, ĂРÇА — Турă. Ырлăх, амалăх турри. Уй-хир пурлăхне ўстерекен турă.

110. РША [ĂРША] — Уй-хир турри. Шăрăх яракан турă. Рша çапать — тырпула типĕтсе пĕтерсе лартать.

111. САЛАМАТ — Ырă сунакан ырă. Саламат кĕперĕ — Асамат кĕперĕ.

112. СĂВАП — Ырă. Чуна çăлмалли ырă ĕç.

113. СЕКТИ — Турă. Ака турри. Ака пуç турри.

114. СЕХМЕТ — Хăратакан чир яракан усал. Вăрçă кăларакан усал. Вутлă сехмет — хăрушă усал. Çĕр сехмечĕ — çĕртен тухакан усал. Çĕр çине килекен, ишсе-ватса каякан асар-писер çил. Çумăр, пăр. Çĕр куçса йĕтăнса анса пулнă инкек.

115. СЕХРЕ — Ырă усал. Сехри хăпнă — хăранă.

116. СЕРЕН — Уяв. Ырă усал. Сĕренпе вирĕм йĕрки пĕр пек. Вилнĕ ваттисене аслă уяв хыççăн, çуркунне, кĕркунне ялтан масар çине сĕрсе хăваласа ăсатса янă йĕрке. Сĕрентен тасални.

117. СИНКЕР — Вăрçă, инкек, чир яракан усал. Синкер çўрен— усал вăя яраканни. Çил синкерĕ — усал çил вăйĕ. Çул синкерĕ — çул çинчи усал вăй. Синкер авал ырă турă выранĕнче пулнă. Çынна хăйĕн вăйĕпе хўтĕленĕ, ун умĕнчи усала чарса сирсе янă.

118. СУЛА — Усал. Чир яракан хаяр. Çăпан, шыçă хаярĕ. Çĕр сули — çĕр хаярĕ, вăйĕ.

119. СУРĂХ УРИ — Уяв. Турă. Сурăх ури уявĕ раштавăн 25-мĕш кунĕнчен пуçланса кăрлачăн 7-мĕш кунĕччен пырать. Сурăхсем пăрласа пĕтерни хыççăнхи уяв. Çĕн çул уявĕ. Турă. Сурăхсене пăхакан ырă. Сурăх ырри. Картиш турри.

120. СЫХЧА — Турă. Упракан турă. Сыхча турă йышĕ: Карта сыхчи, Авăн сыхчи, Йĕтем сыхчи, Çил сыхчи, Этем [çын] сыхчи, Чун сыхчи, Чун сыхчи амăшĕ тата ыттисем те.

121. ÇĂВА — Вилнĕ çынсене пытаракан вырăн. Çăва çинчи турăсем, ыр-хаярсем. Вилĕм яракан усал. Çăва пуçĕ — чи малтан çăва çине пытарнă çын чунĕ. Çăва çине

● Киремет. Людмила Гаврилова ӳкерчӗкӗ



190. ШАТĂН — Хура усал. Выльăхсене пĕтерет. Лашана чирлеттерет, шăнăрне хуçать (тататЬ). Шатăн йышĕ: Шатăм, Шалкăм.

191. ШАТРА — Шатра чирĕ яракан усал, вĕлерекен. Шатра йышĕ: Шатра амăшĕ, Чечче шатри.

192. ШĂПЧĂК ТУРРИ — Шăпчăк кайăксен турри. Пыл хурчĕсене пăхакан, пулăшакан турă.

193. ШĂРТ — Тĕрен. Сухапуç тимĕрĕ, сухапуç пайĕ. Ака-суха тума пулăшакан турă. Ака-суха сăрине шăрт çине, тĕрен çине тăрса е ура пусса ĕçнĕ.

194. ШĂТ — Шăтăк шăтаракан ырă усал. Пӳр-сур кăларакан усал.

195. ШЕВЛЕ — Ырă-усал. Ырă-усал çутти. Курăнса каякан мĕлке, çутă. Аякра выляса тăракан çутă. Ӳпĕнсе курăнакан суя курăм.

196. ШУЙТТАН — Усал сывлăш. Усал чун. Шуйттан йышĕ: Шыври шуйттан, Çĕр çинчи шуйттан, Тип шуйттан (чи хаярри), Аслă шуйттан, Кĕçĕн шуйттан, Шуйттан чĕпписем. Шуйттансем шывра, шыв тĕпĕнче, çĕр тĕпĕнче, тамăкра пурăнаççĕ. Çынсене усал, сăтăр тăваççĕ, çылăха кĕртеççĕ. Çын чунне хăйсем патне илесшĕн. Турăран хăраççĕ. Çылăхсăр çын чунне нимĕн те тăваймаççĕ. Вĕсем çын умĕнче качака пек, вăкăр пек, шакла пуçлă старик пек, майракаллă така пек, пăру пек тата тем пек те курăнаççĕ.

197. ШЫВ — Шыв турри. Шыв усалĕ. Шыв туррисен йышĕ: Шыв старик, Шыв ашшĕ, Шыв амăшĕ, Аслă шыв, Кĕçĕн шыв, Таса шыв, Ырă шыв, Ырă шыв амăшĕ, Шыв пӳлĕхçи, Шыв пӳлĕхçин амăшĕ, Çĕр-шу кĕтен, Çĕр-шу тытакан, Шыв турри умĕнчи ырă, Сывлăм шыв, Çăлти (тарасари) вутăш, Шывра пурăнакан ырă, Шыв вăкри, Шыв алтанĕ (автанĕ), Шыв лаши, Юхан шыв турри. Шыв усалĕсем: Хура шыв, Шыв качаки, Шыв мăкăрĕ (вăкăрĕ), Шыв сехмечĕ, Шыв синкерĕ, Шыв тытни, Шыв тум хаярĕ, Шыв хаярĕ, Шыв хаяр амăшĕ, Шыв упи, Шыв вутăш, Шыв калти, Шыв хытти, Шыв шăтăкĕ, Шыв шуйттанĕ, Юхха, Ювха. Шыв туррин йышĕ тарăн авăрта йывăç пӳртре пурăнать. Шыврисем туй тунă вăхăтра шыв пăкăртатса тăрать. Шыв туррисене чӳк туса асăннă шыва таса тума ыйтнă. Çуркунне-кĕркунне çыранран тухсан, ватса çĕмĕрсе хăварма хушман. Çĕртсе яма ыйтман. Çултаlăкра çăлкуçне икĕ хут тасатса чӳк тунă. Çăлкуç вутăша, вутăш ачине шыва сыхлама ыйтнă: «Чир ан яр», — тенĕ. Пăр парсан шыврисем валли кĕсел пĕçерсе кĕселпе чӳк тунă, Вак касса шыва виçĕ çăпала кĕсел янă. Çын вилсен вилнĕ çынна çума шыва укçа хывса илнĕ.

198. ЫРĂ (ЫР) — Турă. Çуратакан, ырлăх паракан турă. Ырă йышĕ: Аслă ырă, Кĕçĕн ырă, Вăталăх ырă, Çĕнĕ ырă, Ырă пӳлĕхçи, Çул çӳрекен ырă, Таврари ырăсем, Тăвам ырă, Ырă чӳк кĕлĕ, ...(çавăнта) выртакан ырă, Тур умĕнче çӳрекен ырăсем, Ĕне ырри, Сурăх ырри. Ырă-усал, Ырă-хаяр.

199. ЭЛЕС-МЕЛЕС — Усал. Урлă-пирлĕ, лăпăс-лапăс, сăнсăр-питсĕр питĕ чăрсăр вăйлă усал.

200. ЭЛМЕН КĔТЕКЕНĔ — Турă. Вут-хĕлхеме, хура-хĕрлĕне сыхлакан турă.

201. ЭЛТТЕМ-ШЕЛТТЕМ — Усал. Хура пурнăç шăпи.

202. ЭРНЕ ВАТТИ — Турă. Ватă карчăк, эрне йĕркине, эрнекуна, вăхăта сыхлакан турă.

203. ЭСРЕЛ — Усал. Чун илекен, Чунилли.

204. ЭСРЕМЕТ — Усал. Усал тавраш̆ĕ.

205. ЭСРЕХУН — Усал. Усалсен, шуйттансен хунĕ, йышĕ.

206. ЭТЕМ-ТУРĂ — Çын турри. Аслати турă.

207. ЮРАТУ КĂЛАРАКАН ТУРĂ — Юратăва пăхакан турă.

208. ЮÇ (ЙӲÇ) ПАРАКАН — Йӳçĕ паракан турă е Усал.

209. ЮХХА — Усал. Усал çĕлен. Аштаха, аçтаха. Çĕр çула çитсен мĕн пулас тет — çавă пулать. Пĕлĕт çине те вĕçсе ухать (улăхать). Юхан шыв çинчи юхха хĕр ача пек курăнать. Çӳçне шыва ярса юхтарса ларать, шыва тасатать. Çынна улталаса качча тухсан упăшкине типĕтсе ярать, Юххана çунтарса ямасăр упăшки чиртен çăлăнаймасть.

210. ЯВĂЛ — Хĕрарăм çумне, арçын çумне çыхланса ясара яракан усал.

211. ЯЛ ТУРРИ — Турă. Авалхи тĕнре — яла сыхлакан турă, яла ăнтаракан йĕрĕх, ял сыхчи, турăсем. Ял турри, ялти кĕлмĕç пурăнакан çыннăн кĕлетĕнче е уя тухса каякан хапха тĕлĕнче, е ял çумĕнчи чӳк вырăнĕнче, е çăл умĕнче ларать. Ял çунса кайсан е мур ерсен çĕнĕ вырăна куçса ларнă. Ял уявĕнче, ял киреметĕнче чӳк тунă вăхăтра çĕнĕ ялсем кив ял туррине те асăнса кĕл тунă.

Тӳркӗлли. Людмила Гаврилова ӳкерчӗкӗ.



йывăç турачĕ те, ун çине çĕлен çип тирсе çакнă нухрат е тăхлан-шăвăç таткн те, тата тем ампĕ те — йăлтах «йĕрĕх» ятлă пулса кайнă.

Киле-йыша упраса усракан ырă кĕлеткине те «йĕрĕх» тенĕ, килтен хĕр качча каяс пулсан ăна тăмран унаса йĕрĕх кĕлетки туса парса янă. Каярахга тăм кĕлетке вырăнне качча каякан хĕр кăмака умĕнчен тăм татки кăна хăйпăтса кайнă, çапах ăна та «йĕрĕх» тенĕ.

Авалхи тĕн манăçса пынă май кил-йыш тăнăçлăхне упраса пурăнакан ырă усала çаврăннă, шăтан-юхан ярса асаплантаракан ыр-хаяр пулса тăнă. Ячĕ вара çавах «йĕрĕх» юлнă. Ентĕ эпир унашкал усал ыр-хаяр пулни çинчен илтмен те, анчах ятлаçнă чухне çав «йĕрĕх» ятне асăнса хăваратпăрах. Акă еплерех çаврăнса пырать вăл сăмах пĕлтерĕшĕ! «Мĕн вăл йĕрĕх!» — тесе ыйтсан, çĕр çын çĕр тĕрлĕ хурав пама пултарать. Пурте пĕр харăсах тĕрĕс те пулаççĕ, суя та суяççĕ пулса тухать. Çавăнпа та Н. Е. Наумов хатĕрленĕ словаре вулакансене ăшă пиллĕ те меркемеслĕ пулма ыйтассăм килет. Еçе ăна мĕн ситменнине кура мар, мĕн тунине кура хаклаççĕ. Енчен те вулаканăн «вăл аплэ мар та, ку капла мар» темелли тупăнать пулсан, тархасшăн, хăвăр мĕн пĕлнине «Хыпар» редакцине çырса ярăр. Пĕччен сурни типсех пырать, халăх сурсан — кӳлĕ пулать, — тенĕ ваттисем. Халăхпа пĕрле пикенсе ĕçлесен çывăх вăхăтрах «Чăваш мифологийĕн тулли ăнлантаруллă словарĕ» те калăпланса çитĕ. Пурте ялă усса ларсан вара ку таранччен мĕн юлни те юхха кайĕ.

«Хыпар» вулеканĕсене Н. Е. Наумов пек ĕçчен те хастар пулма, халăхăмĕрăн культуришĕн çине тăрса ĕçлеме пехиллесе

Н. ЕГОРОВ,
филологи ăслăлăхĕсен докторĕ.

---

# ХĔРЛĔ ÇЫР ТУРĂ

Пĕррехинче вырăссен Микул турри Çӳлти Турăпа чăваш çĕршывĕ çине анса-курса çӳренĕ тет.

Пĕр çĕрте хутнă мунча пăсăрланса тăнине курнă. Микул турри çакна чăвашсен çурчĕ пулĕ тесе, чăваш мĕнле пурăннине курас тесе кĕме шутланă.

Мунчара, авалхи йĕркепе, чăваш юмçи-эпи йывăр çын арăма ача тума пулăшнă. Çак вăхăтра вырăс сухаллă Микул турă алăка уçса янă...

— Кутта, кутта! ..Русски иттеш... — тесе, лешне вĕри милĕкпе çапса, хăваласа кăларса янă.

Микул турă çиленнĕ, Çӳлти Турă патне пынă, мĕн пулнине каласа панă. Турăна çаксем çине асап хума ыйтнă, çуралнă ачи телейсĕр пултăр тенĕ.

Çакăн хыççăн ачин амăшĕ вилсе кайнă, вăхăт иртсен кил-çурчĕ çунса кайнă, ани-уйĕнчи ӳснĕ тыррине çил-тăвăл килсе çапса кайнă, ашшĕ çул çинче ӳксе вилнĕ. Ача пĕр пĕччен тăлăха юлнă, çынсем патĕнче ӳснĕ, ыйткаласа çӳресе хырăмне тăрантнă.

Пĕр çиччĕ-таххăрта çынсем патĕнче тара кĕрĕшсе çӳренĕ. Вăл ăçта ĕçленĕ — çавăнта ĕç ăнман, инкексинкек кăна пулса пынă. Çавăншăн ăна ниçта та ĕçе илесшĕн пулман. Çĕтĕк пурăнăç ун хыçĕнченех пынă. Питĕ начар, чухăн пурнăçра пурăннă.

Пĕрре çакна чăвашсен çĕр-йыш турри Хĕрлĕ çыр тĕл пулнă. Вăл унăн нушине пĕтĕмпех пĕлнĕ.

— Эсĕ пĕр пуян патне кĕтӳçе кĕр. Еçшĕн укçа ан ил, пĕр çулĕнче — шурă тĕслĕ путексене, тепĕр çулĕнче хура тĕслĕ путексене илмелле кĕтӳне кĕрĕш.

Ку çапла тунă та. Чăнах та пĕр çулхинче сурăхсем пĕтĕмпех шурă путек, тепĕр çулхинче хура путексем туса панă. Пуянĕ кун хыççăн çакна хăваласа янă. Çак тăлăх хăй кĕтӳне хăваласа урăх çĕре куçса кайнă. Çул çинче Микул турă тĕл пулнă. Кĕтӳ шурăпа хура путексем пĕр тан пулнинчен тĕлĕннĕ.

Микул турă Çӳлти турă патне пынă, çакă кĕтӳ камăн тесе ыйтнă. Турă ăна çав тăлăх ачан тенĕ. Микул турă, çилĕ иртменрен, каллех асап хума ыйтнă. Вара тăлăх ачан кĕтĕвĕ пĕр каçрах вилсе выртнă.

Ку тăлăх макăрса кулянса каллех ыйткаласа çӳреме пуçланă. Çакна татах, тепĕр хут, Хĕрлĕ çыр тĕл пулнă.

— Эсĕ, ял çыннисенчен ыйтса пĕр кĕтес те пулин ыраш тата çуркунне пĕр лаптăк та пулин урпа ак, — тесе каланă. Лешĕ çапла тунă.

Çак тăлăхăн ани çинче тыр-пул темле вăйлă пулнă. Çакна Микул турă курнă, питĕ тĕлĕннĕ. Çӳлти Турă патне пырса, ку камăн ани тесе ыйтнă. Турă ăна çавăн ани тесе каланă. Микул турă татах асап хума ыйтнă.

Тăптăр уяр кăнтăрла, хĕвел пăхса тăнă вăхăтрах Турă çак тăлăх çын ани çине пăрлă çумăр ярса тыр-пула пĕтĕмпе тенĕ пекех çапса-ватса пĕтернĕ.

Тăлăх ача ку вăхăталла çитĕнсе çитнĕ качча пулнă ĕнтĕ, ани çине чупса пырать, мĕн курнипе макăрса ярать.

Ăна лăплантарма каллех Хĕрлĕ çыр пырса тухать:

— Эсĕ кĕре çитсен, çакăнта юлнă тыр пĕрчисене, пучахсене пуçтарса, авăртса, çимĕç пĕçерсе, сăра туса кĕрхи чӳк ту.

Ку çапла тунă.

Кĕркунне, чӳклемере, тĕн шăтăкĕ çумне çурта лартса, уçнă алăк умне тулли сĕтел лартса çăкăрпа сăрапа чӳк тунă. Пырса каякансене сăрапа, çимĕçпе хăна тунă.

Çакăн патне Микул турă пырса тухнă. Тăлăх çакна сăрапа хăна тунă. Микул турра чăваш сăри питĕ килĕшнĕ. Çук пулсан та çак çын уçă кăмăллă пулнинчен тĕлĕннĕ.

Турă патне пырса хăй тĕлĕннине каланă, ку кам, мĕнле çын тесе ыйтнă.

Турри ăна çавă, эсĕ асап хывма хушакан тăлăх тенĕ.

Микул турри мĕнле-ха унăн пысăк кăмăл, нихçан та хуçăлмасть тесе тĕлĕннĕ.

Турри каллех асап яма ыйтатăн-и тенĕ.

Микул турри кун пек нушана чăтнă хыççăн та кăмăлне пĕтермен çынна мĕн чухлĕ ырă пама пултаран, Турă çавăн чухлех пар тесе каланă.

Çакăн хыççăн çак тăлăх ĕç ĕçлесе пуяна тухса çитнĕ, авланнă, пысăк телейлĕ çемьеллĕ пулнă.

Çултан çул Хĕрлĕ çыра асăнса халăх йăлипе чӳклеме ирттернĕ.

---

Якуркка МИКИХВЕРĔ (Никифор Егорович НАУМОВ). ЧĂВАШ ТĔНĔ (тĕнчекурăмĕ, ыр-хаярсем — мифологи словарĕ). «Хыпар» кĕнеки, 4№. Шупашкар, 1992, юпа, 3. Тираж — 73000 экз.
Рецензи: Николай Иванович ЕГОРОВ, филологи аслăлăхĕсен докторĕ.
Пичете хатĕрлӳ: Илле ИВАНОВ.
Хуплашкасем: Сергей КАДИКИН.
Тĕп редактор: Алексей ЛЕОНТЬЕВ.

500=

